Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Светлая (Петрова) Елена Владимировна**

**Книга: Яшлăхпа ватлăх**

**Басня: Тилĕпе Ула курак**

# Тилĕпе Ула курак

Çăвать кăна япшар чĕлхеллĕ Тилĕ:
− Ула куракăм, эсĕ маншăн пурнăç пилĕ!
Леш те юлсах каясшăн мар унран:
− Эс, Тилĕ тусăм, маншăн тăванран тăван.
Чунтан калатăп, хакли çук санран! −
Хайхискерсем пĕрне-пĕри ачашшăн
çупăрлаççĕ,
Пыл пек, çу пек сăмахсемпе мухтаççĕ…
Ват Чĕрĕп çак сăмахсене илтсен
Вĕсем патне йăкăртатса пырать хуллен.
− Пикемĕрсем,
сире ырă хыпар эп пĕлтерем:
Инçех те мар, шăп хамăр ĕшнерех,
Илемлĕх конкурсĕ пулать иккен,
Питех аванччĕ иксĕр те унта çитсен,
Пире талантăрпа тĕлĕнтерсен…

− Аха, − тет Тилĕ, − пит кĕттетĕм-ха куна,
Ку уявра, пĕлетĕр-и,
тивĕçлипе хак параççех мана!
Тăхта-ха, чим-ха, −
− тет ăна Ула курак, − унта
Эп пулмалла пĕрремĕш вырăнта!
Куна илтсессĕн Тилĕ тарăхса каfive:
− Пĕрремĕш вырăнта? Ай, катемпи!
Мĕнле вăл калаçать?
Сан пек айван мала ăçтан тухать?
Тин çеç пĕрне-пĕри мухтакансем
Çапла сапма пуçларĕç сив хĕлхем.
Куракĕ Тиллине хăрăмпала сăрлать,
Леш Курака çĕр чăтайми хурлать.
Тапранчĕ вăрманта шăй-шай,
Пур кайăк тĕлĕнсе кăна тăрать… Ай-ай!

Туссем, хăш чух илемлĕх вăййинчен çапла
Пулса тухать камитлĕ япала.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.